ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЁ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ЯЛ ХУÇАЛĂХЁНЧЕ УСĂ КУРАКАН ÇЁРСЕН ПУЛĂХНЕ ÇЁНЕТСЕ ЛАЙĂХЛАТАССИ ÇИНЧЕН" САККУНЁН 9 ТАТА 13 СТАТЙИСЕНЕ ТАТА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ЯЛ ХУÇАЛĂХНЕ АТАЛАНТАРАССИ ÇИНЧЕН" САККУНЁН 4 ТАТА 13 СТАТЙИСЕНЕ УЛШĂНУСЕМ КЁРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2025 çулхи ака уйăхĕн 24-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче ял хуçалăхĕнче усă куракан çĕрсен пулăхне çĕнетсе лайăхлатасси çинчен" 2005 çулхи нарăс уйăхĕн 8-мĕшĕнчи 2 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2005, 62 №; 2011, 89 №; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 12 №; 2016, 6 №; "Республика" хаçат, 2022, çу уйăхĕн 5-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 9 статьяра:

а) тăваттăмĕш абзацра "çĕр участокĕсене харпăрлăхра тытакансене, çĕрпе усă куракансене, çĕр хуçисене тата ял хуçалăхĕнче усă куракан çĕрсен шутĕнчи çĕр участокĕсене тара илекенсене" сăмахсене "ял хуçалăхĕнче усă куракан çĕрсен шутĕнчи çĕр участокĕсен саккунлă хуçисене" сăмахсемпе улăштарас;

ă) пиллĕкмĕш абзацра "çĕр участокĕсене харпăрлăхра тытакансене, çĕрпе усă куракансене, çĕр хуçисене тата ял хуçалăхĕнче усă куракан çĕрсен

шутĕнчи çĕр участокĕсене тара илекенсене" сăмахсене "ял хуçалăхĕнче усă куракан çĕрсен шутĕнчи çĕр участокĕсен саккунлă хуçисене" сăмахсемпе улăштарас;

2) 13 статьян иккĕмĕш абзацĕнче"çĕр участокĕсене харпăрлăхра тытакансем, çĕрпе усă куракансем, çĕр хуçисем тата ял хуçалăхĕнче усă куракан çĕрсен шутĕнчи çĕр участокĕсене тара илекенсем" сăмахсене "ял хуçалăхĕнче усă куракан çĕрсен шутĕнчи çĕр участокĕсен саккунлă хуçисем" сăмахсемпе улăштарас.

2 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче ял хуçалăхне аталантарасси çинчен" 2014 çулхи авăн уйăхĕн 29-мĕшĕнчи 49 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2014, 9 №; 2015, 5 №; "Республика" хаçат, 2018, çĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕ; 2019, нарăс уйăхĕн 20-мĕшĕ; 2022, çĕртме уйăхĕн 8-мĕшĕ; 2024, раштав уйăхĕн 11-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 4 статьян 4-мĕш пайне çакăн пек çырса 7-мĕш пункт хушса хурас:

"7) Чăваш Республикин территорийĕнче ял хуçалăх ӳсен-тăранĕсен сорчĕсен тата гибричĕсен çĕршыври селекцине тăвакан Раççейри юридически сăпатсене, Раççей Федерацийĕн гражданĕсене приоритетлă йĕркепе патшалăх пулăшăвне парасси.";

2) 13 статьян 3-мĕш пайĕн 5-мĕш пунктне çакăн пек çырса хурас:

"5) ял хуçалăхĕнче усă куракан çĕрсене тата ытти категорири çĕрсен йышĕнче ял хуçалăхне тытса пыма усă куракан е уйăрса панă çĕрсене, ял хуçалăхĕнче усă куракан çĕрсен пулăхĕ мĕнле пулнин кăтартăвĕсене, ял хуçалăхĕнче усă куракан çĕрсен пулăхне çĕнетсе лайăхлатас, ял хуçалăхĕнче усă куракан çĕрсем япăхланнине сирес енĕпе ирттернĕ меропрятисен результачĕсене шута илесси çинчен, ял хуçалăхĕнче усă куракан çĕрсен патшалăх мониторингĕн результачĕсене шута илесси çинчен;".

3 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О. Николаев

Шупашкар хули
2025 çулхи ака уйăхĕн 29-мĕшĕ
26 №